**Сенти лаши**

Чипер ача Сенти пур,
Чупса çӳрет урамра.
Кĕвентине уталнса,
Ача вылять лашалла…
К. Иванов
Шыв ик енĕпе йăмра –
Хулăн хуппи кушăрка…
Тымар янă яйлăма
Чăваш ялĕ Хушăлка.

…Урамра ача çӳрет,
Утланса велосипед,
Нимĕн шикленмесĕрех
Ярăнтать вăл кунĕпе.

Сенти мар-ши ку, сенти,
Хура кăтра çӳçлĕскер? –
Урапаллă «кĕвенти»
Ытла, ытла йӳрĕк-çке!

И-ха-ха! Темест лаши,
Шăнкăр! çеç вăл кĕçенет…
Çутă урапа ташши
Вĕçтерет Лешкас енне.

Сапалать хĕвел сипет…
Юмах юлчĕ авала,

Утланса велосипед

Сенти вылять лашалла!

*Ирхи, Г. Сентти лаши : [сăвă] / Г. Ирхи // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 369.*